

Экологи кăларăмĕ

Çут çанталăк

Шухăш

Эх, хитре-çке çут тĕнче!

Василий Михайлович Ванюшевпа калаçнине яланах аса илетĕп. Вăл – удмурт халăх писателĕ, ăслăлăх докторĕ, профессор, паллă ăсчах, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Шупашкара конференцие пĕрре çеç мар килнĕ. «Салам, Шупашкар!» кино та ўкернĕ. Чăвашсене хăйĕн тăван халăхĕпе танлаштарса нумай тĕпчерĕ. «Как по-чувашски Родина?» – терĕ сăмах май. Эпĕ, паллах, пĕр шухăшласа тăмасăрах: «Тăван çĕр-шыв», – терĕм. Тĕлĕнсе кайрĕ. «Çĕр тата шыв. Вăйлă каланă чăвашсем. Урăхла калаймăн та çав», – хушса хучĕ хавхаланса.

Çапла, çĕр тата шыв. Çут çанталăк вĕт ку! Чылайччен шухăшласа çŭрерĕм çак сăмах пĕлтерĕшĕ пирки. Çын çут тĕнчене пурăнма килет. Çут çанталăк сăпкинче ярăнса ўсет. Çыншăн çут çанталăк çав тери хаклă. Çуралнă çĕр-шыв! Аякра нумай çул пурăнсан та çуралнă çĕр-шыв хăй патнех туртать, этем вилĕме тăван çĕр-шывăрах кĕтсе илме ĕмĕтленет. Çапла ăс парса ўстернĕ-çке ваттисем мĕн авалтан.

Ача çуралсан ун ячĕпе ĕывăç лартнă. Çырма-çатра çурса ан кайтăр тесе йăмра лартса ўстернĕ. Йăмраллă чăваш ялĕсем, ĕывăç ăшне путнă ялсем... Йăмра пушартан та сыхланă пŭрт-çурта. Çирĕк те, тирек те лартнă шывлă вырăна. Тĕп сакайне, нŭхрепе шыв ан кĕтĕр тесе. Çирĕкпе йăмра шыва çăтаççĕ. Çак йĕркене ватăсем çирĕп тытса пынă.

Илсе пăхар-ха тата çут çанталăкпа еплерех килĕшŭллĕ пурăннине. Юр кайса пĕтет, çĕр симĕс тум тăхăнать. Çимĕк çитиччен курăк татма, ăна таптама юраман. Çĕре патакпа çапма та хушман. Çĕр пĕтĕ тесе шутланă. Çимĕк çитиччен çичĕ хутчен шыва кĕмелле пулнă. Çирĕп шăм-шаклă пулма. Курăк çинĕ. Ут кăшкарĕ, хирти ыхра-сухан, качака кĕпçи тата ытти те ача-пăчан юратнă апачĕ пулнă. Çарантан ытамĕ-ытамĕпе ут кăшкарĕ татса килнĕ килте çиме. Сертепултран яшка пĕçернĕ чухне ытла та селĕм пулнă. Çут çанталăк хăйĕн çимĕçĕпе хăналанă халăха.

Иртнĕ вăрçа çулĕсенче выçлăх аптратнă. Çав йывăр кунсенче те халăх çут çанталăк вăйне шаннă. Кулăшла çакăн пек халап çŭретчĕ. Пĕррехинче çĕр улми ывăнса çитнĕ. «Эпĕ пулмасан мĕн çисе пурăнĕç-ши вĕсем? – тет. – Вăрмана каятăп та çакăнса вилетĕп». Тухса утать çĕр улми вăрмана. Пырса кĕрет те йывăç турачĕсем çине пăхать. Хăш турачĕ çирĕпрех-ха. Ăна серте асăрхать. «Мĕн тăвасшăн эсĕ, çĕр улми?» – ыйтать хайхи. Çĕр улми тĕрĕссине калать: «Çакăнса вилес тетĕп». «Эй, тăванăм, усал шухăша пуçран кăларса ывăт, – хастарланать серте. – Сана пулăшма эпĕ, серте, килтĕм. Халăха ахаль те йывăр. Яла, халăх патне, каяр çавăтăнса. Тутлă яшка пĕçерсе çисен çынсен вăй хушăнĕ». Акă çĕр улмипе серте çавăтăнса яла пырса кĕреççĕ. Ял çийĕн тутлă яшка шăрши сарăлать...

Çапла каласа парса шŭтлетчĕç çынсем, çут çанталăка тав тăватчĕç. Ир тăрсан çынсем хĕвеле пуç таяççĕ. «Ырă кун пултăр!» – теççĕ. Юман – атте, çака – анне, шурă хурăн – пĕве çитнĕ хĕр, çамрăк юман – туй каччи. Уйра ўсекен пĕччен йывăça тĕкĕнме юраман, вăл пĕччен çын шăпине аса илтернĕ. Йывăççем çинчен мĕн чухлĕ юрă хывнă сĕм авалтан. Ман асăмра мĕн пĕчĕкрен янăрать халăх юрри:

Шыв хĕрринче пилеш
ай ўсет-çке,
Çупкам-çупкам шыва
ўкет-çке,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн юхса
каять-çке,
Ĕлĕк пĕрле выляни-кулни
Ушкăн-ушкăнăн аса
килет-çке,
Минутпа, çеккунтпа
иртсе каять-çке.

Çын пурнăçне шыв хĕрринче ўсекен пилешпе танлаштарса юрланă. Кайăк-кĕшĕке еплерех хисепленĕ тата! Çумăр витĕр вĕçекен чĕкеçе те хĕрхеннĕ. Чĕкеç йăвине ватма хушман. Ача-пăчана йĕркелĕхе вĕрентнĕ. Лупас кĕтесне çавăрнă чĕкеç йăвине ватсан пушар тухать тенĕ. Удмурт халăхĕн вара лаша ўксе вилет. Ача-пăчан асăхануллă пулмалла. Михаил Петровичăн «Кивĕ Мултан» романĕнче Мокей ача чухне чĕкеç йăвине ватнă. Çăвĕпех лаша вилесрен хăраса пурăнать. Ватăлсан аса илет пĕчĕк чухне тунă йăнăша.

Вĕçен кайăк çинчен мĕн чухлĕ юрă хайланă тата! Хурлăхлă кунсенче те, савăнăçлă самантра та юрланă çут çанталăкпа этем пурнăçне танлаштарса. Акă тата халăхăн тепĕр ырă йăли. Çимĕк çитрĕ. Халь ĕнтĕ курăк татма та, йывăç тураттине хуçма та юрать. Çимĕкре вăрмантан вĕрене, пилеш турачĕсене хуçса килнĕ, хапха çумне хĕстерсе лартнă. Халăх çут çанталăк ырлăхĕпе киленнĕ.

Шăнкăрчсем юрă шăрантараççĕ. Кураксем хăйсен сассипе таврана янратаççĕ. «Кураксем килнĕ, кураксем килнĕ!» – тесе ача-пăча сике-сике ташлать. Таврара çурхи илем. Çуркунне хыççăн – çулла... Çырлана каймалли вăхăт. Кĕр те пуян. Халăх кĕр пуянлăхĕпе хĕпĕртет. Хĕл илемĕ хăйне май. Пурăнать этем çут çанталăкпа килĕшŭллĕн савăнса.

■ **Роза ПЕТРОВА-АХТИМИРОВА,**
Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Редакцие хуравлаççĕ

Полигон тăваймастпăр

Районта Тавралăха хŭтĕлемелли çулталăк планпа килĕшŭллĕн иртет.

● *«Экомарафон-2013» чупура.*

Кăрлачăн 30-мĕшĕнче Мăн Шемертен ял тăрăхĕнче Раççей Пенсионерсен пĕрлешĕвĕн районти уйрăмĕн ларăвне йĕркелерĕç. Пĕрлĕхĕн республикăри тата Етĕрне тăрăхĕнчи организацийĕсен ертŭçисем Валерий Сапожниковпа Валентин Семяхин экологи çулталăкĕн тĕллевĕсемпе паллаштарчĕç. Кăшт маларах Етĕрнере «Çĕр чăмăрĕ пиртен пулăшу кĕтет» ăслăлăх-практика конференцийĕ пулчĕ. Унта педагогсене экологи пĕлĕвĕ парассипе, çак ĕçри йывăрлăхпа çыхăннă ыйтусене сŭтсе явнă, çут çанталăка хŭтĕлесе çырнă тĕпчевсемпе паллашма тăратнă.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ çулталăка кăрлачăн 25-мĕшĕнче Етĕрнери 1-мĕш гимназире уçрăмăр. Ял тăрăхĕсенчен пухăннисен умĕнче «Экос» экологи ушкăнĕ хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ, Çĕр чăмăрне чечеклентерме чĕнсе каларĕ.

Ака 15 – çĕртме 5-мĕшĕсенче экологи хăрушлăхĕнчен сыхланмалли кунсем иртрĕç. Кашни ял тăрăхĕнчех санитари-экологи уйăхлăхĕ йĕркелерĕмĕр, «Йывăç ларт та пăхса çитĕнтер» ятпа тавралăха симĕслентертĕмĕр.

Вĕренŭ учрежденийĕсенче пĕлŭ пухакансем Пĕтĕм тĕнчери çĕр тата Вăрман хывса хăвармалли наци кунĕсене, Пĕтĕм тĕнчери парксен маршне, Çуркуннехи ырă кŭмелли эрнене, «Экошырав», «Шыв-шур пире валли те, ачасем валли те!», «Асăрханăр, сывлăш!», «Парксемпе садсене хŭтĕлер!», «Çут çанталăк еткерлĕхĕ», «Таса çыран» экологи программисене хастар хутшăнчĕç. Çуркунне пурĕ 30 пине яхăн йывăç-тĕм лартрăмăр. Хучашра парк, Урпашра сад, Мăн Чурашра аллея хыврăмăр. Район Акатуйĕнче санитари-экологи уйăхлăхĕнче пуçарулăх кăтартнăшăн Мăн Шемертенпе Пушкăрт ял тăрăхĕсен администрацийĕсене, Советски тата Кăкшăм шкулĕсене Хисеп хучĕпе хаклă парне парса хавхалантартăмăр. Çĕртмен 7-мĕшĕнче çăмăл атлетсен «Экомарафон-2013» чупăвĕ иртрĕ. Ăна Аркадий Айдак çуралнă куна тата Тавралăха хŭтĕлемелли çулталăка халалларăмăр.

Библиотека ĕçченĕсем Етĕрнепе Сăр тăрăхĕнчи чи илемлĕ вырăнсене çитсе курмалли çул хыврĕç: Тăван тавралăхăн халăха хăйĕн патне туртакан кашни лаптăкĕ çинчен тĕплĕн çырса кăтартрĕç.

Ял тăрăхĕсене ешĕллетес, тирпейилем кĕртес тĕлĕшпе кăçал та куравконкурс йĕркелетпĕр. Вăл ултă номинацийе иртĕ. Çĕнтерŭçĕсене çак кунсенче палăртатпăр.

Шел те, республика хыснинчен укçа уйăрманран Етĕрнери хытă каяш полигонне туса пĕтереймеспĕр. Строительствăна çарса лартма тивĕрĕ. Районтан ăнăр-тапăра Чул хула облаçĕнчи Воротынец хулинчи çŭп-çап вырнаçтармалли станцие турттаратпăр.

Пирĕн пурĕ 33 гидросооружени. Вăл шутран 4-шĕ – ял тăрăхĕсен харпăрлăхĕ, ытти – ял хуçалăх предприятийĕсен. Кăçал Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Хăмаркка пĕвине çĕнетĕç. 2014-2015 çулсенче Мăн Шемертенрипе Советскирине йĕркене кĕртме палăртнă. Етĕрне ял тăрăхĕнчи «Новая жизнь» общество тата Пушкăрт ял тăрăхĕнчи «Заря» ЯХПК пулă ĕрчетеççĕ. Общество вырăнне, çын йышлă çŭрекен ытти çĕре вылăх виллине пăрахса шăршлантарнă, яла илемсĕрлетнĕ тĕслĕхе шута илмен.

■ **Владимир КУЗЬМИН,**
район администрацийĕн пуçлăхĕ

Тăван тавралăх

Ачалăхри арман

Етĕрне районĕнчи Аслă Сăнар ялĕ витĕр Юрпашюхан шывĕ иртет.

Ĕлĕк ял-йыш ăна пĕвелесе арман лартнă. Алă вĕççĕн ăсталанă. Малтан çырма хушшине урапапа тăм турттарса хăпартнă. Пĕверен шыва виçеллĕ кăларса тăмашкăн затвор вырнаçтарма сăвайсем лартнă. Пирвай вăрăм юпана тăратса вĕренпе карăнтарнă, çумне тăватă çын тăмалăх пусма тунă. Ун çине хăпарса тăнă та тукмак каскăпа /хăш-пĕр çĕрте ăна папка тенĕ/ сăвая çŭлтен аялалла кĕрĕслеттернĕ. Ывăнсан – юрă пуçланă. Пĕррехинче ăна эпĕ те илтнĕ. Вăл халĕччеренех асран тухман. Тен, ытти районта сăвай çапакансен юрринчен урăхларах. Ку ыйтăва ятарласа тĕпчемелле.

Пĕвери шыв канав тăрăх арман кустăрми çине юхатчĕ те вала çавăрттаратчĕ, арман чулĕ кăлтăр-кăлтăр çаврăнатчĕ. Пирĕн ял арманне Николайпа Илья Пачаровсем ертсе пынипе лартнă. Вĕсемех ăсталăха çамрăксене вĕрентсе хăварнă.

Хĕлле пĕве пăрга витĕннĕ. Çуркунне вăл каллех шывпа тулнă. Хулăн пăр капланса килнĕрен сарăлсах каятчĕ. Катăксем пĕр-пĕрне хĕссе, хирсе, шатăртатса çŭлелле йăтăнатчĕç. Çавна май шыв татах пухăнса, вăй илсе вĕсене юхтарса каятчĕ. Шăтăр-шатăра ачасенчен пуçласа ватă çынсем таранах пăхса тăратчĕç. Эпĕ пурăннă пĕр енлĕ Тури улăх урамĕ çыранран 30 метрта кăначчĕ. Ял витĕр район центрне служащисем, вăтам шкулта вĕренекенсем утса иртетчĕç. Килĕсене çак пĕве урлах таврăнатчĕç. Шыв вăйлă аннă чухне затвортан кайса ĕлкĕреймен шыв пĕве урлă юхатчĕ. Çапах та хăюллăраххисем каçма тăрăшатчĕç. Урамри çынсем вĕсене хумханса пăхса тăратчĕç. Çуркунне çыран ишĕлетчĕ. Çавна пула 9 килти хуçалăх ялтан Шăмата, Тури Сăнара, Моляка куçрĕ. Халĕ пĕчĕккĕн шăнкăртатса юхакан Юрпаш миçе кĕпере, валашкана, вăхăтлăх каçмана юхтарса кайман-ши?

■ **Николай АНДРЕЕВ**

● *Чăваш Енре шыв арманĕ пĕрре те юлман. Раççейре вара туристсене илĕртме тăваççĕ.*

«01» служба

Пушар тухасран асăрхан

Çу варринче çанталăкшăрăх тăчĕ. Темиçе эрне çумăр çумарĕ, çĕр типрĕ, ял варринчи çырмара пĕр тумламшыв та юлмарĕ.

Çав кунсенчен пĕринче Вăрнар районĕнчи Хураçырмари пушар тухасран асăрханман çынсем ял-йыша шалт тĕлĕнтерчĕç: çырмари çăтăр-çатăра вут чĕртсе çунтарчĕç. Çулăм кăвайт çине çу сапнă евĕр вăйланса çŭлелле кармашрĕ. Çил ăна çывăхри çурт-йĕр еннелле хăвалас хăрушлăх тухса тăчĕ. Юрать-ха, хура пĕлĕтсем капланса килчĕç. Кĕçех вăйлă çумăр чашлаттарчĕ – вут-çулăма алхасма памарĕ.

Тепĕр куннех Ершепуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Евгений Музяков патне васкаса çитрĕм. Хураçырма çыннисене инкек кăтартма пултаракансене – çырмари хăрăк-марăка вут чĕртсе çунтаракансене – явап тыттарма ыйтрăм. Вĕсене асăрхаттарас вырăнне вăл мана кŭрентерчĕ. Çурт-йĕре «хĕрлĕ автанран» сыхламалли пирки каланăшăн çилленчĕ. «Пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе санăн мĕн ĕç пур, мĕн тумаллине хамах пĕлетĕп», – терĕ. Пуçлăх вут-кăвартан сыхланас тĕлĕшпе тăрăшасса шанса киле таврăнтăм.

Икĕ эрнерен çав çырмаран тĕтĕм каллех мăкăрланса хăпарчĕ, вунăвун пилĕк минутран вăл пĕтĕм яла хупăрласа илчĕ. Çатăрка шатăртатса çунчĕ, вут-хĕм сапрĕ...

■ **Анатолий АЛЕКСЕЕВ.**
Вăрнар районĕ, Хураçырма ялĕ

Сыхлав

Хăтлăх пĕлтерĕшĕ пысăк

Республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакантерриторийĕсен /ÇÇУСТ/ дирекцийĕ кăçал мĕнле ĕçлет? Директор тивĕçне пурнăçлакан Владимир ЯКОВЛЕВ хуравлать.

– 2011-2013 çулсенче Чăваш Енре çав лаптăксен ĕçне йĕркелемелли ведомство программипе тата дирекци планĕпе килĕшŭллĕн кăçал тепĕр ÇÇУСТ туса хумаллаччĕ, – терĕ Владимир Алексеевич. – Министрсен Кабинечĕ иртнĕ уйăхра Куславкка районĕнчи Куснар ялĕн çăл куçне çут çанталăкăн республика шайĕнчи палăкĕсен йышне кĕртме йышăнчĕ. Ку хутлăхсенче чĕр чунпа ўсентăрана хŭтĕлемелли йĕркене иртен-çŭрен еплерех пăхăннине тăтăш тĕрĕслесе тăратпăр, чĕрĕлĕхе тĕпчеме ăсчахсене май туса паратпăр. Çулталăк вĕçленичченвĕсене вун тăватă хăтлăхпа ÇÇУСТ никĕслеме пăхса хунă вырăн биотĕрлĕлĕхне тишкерме явăçтаратпăр. Территорисен ытларах пайĕнче шырав ирттерсе республикăра сайра тĕл пулакан ўсен-тăранпа чĕр чунăн темиçе çĕнĕ лаптăкне шута илчĕç, этем хŭтлĕхе кŭрекен сиене уçăмлатрĕç, лаптăксен хăй евĕрлĕхне упраса хăварас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине палăртрĕç.

– Кусан-çŭрен лайăх ĕрчесен сыхлăхран хŭтлĕхре шугланмантăрăхсене пурăнма куçаять-и?

– Пысăкрах хутлăхсенче вăл аванрах хунать тата тĕсĕ-йышĕпе пуянрах. Кашни чĕр чунăн – хăйĕн лаптăкĕ. Паллах, вĕсене тата чĕрĕлĕхе хуралланни браконьерсенчен, сыхлав йĕркине пăсакансенчен хŭтĕлеме, кусан-тăран шутне пĕр шайра тытса тăма май парать. Хăтлăхра чĕр чун йышлансан урăх çĕре, вăл шутра ÇÇУСТ тулашне, пурăнма куçса тавралăха пуянлатать. Çакă – территорин лайăх енĕсенчен пĕри.

– Чĕрĕлĕх Чăваш Енрен кŭршĕ регионсене сарăлать-и? Вĕсенчен пирĕн пата килеççĕ-и?

– Кашни çŭлте-çĕрте çŭрен хăйĕн кунçулне вăл е ку тапхăрта тĕрлĕ хутлăхпа çыхăнтарать. Çитĕнсен çемьерен уйрăлать, ĕрчеме урăх çĕр суйласа илет. Кунсăр пуçне апат шырама, хĕл каçма çĕнĕ вырăна çул тытать. Ытти сăлтава пула та юнашар чăтлăха куçать. Çапах та уншăн апат пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл ытлă-çитлĕ чух инçетеçывăха каймасть, чухăнлансан тулăх лаптăк шырать. Выçлăх аптратсан ÇÇУСТ чиккинче тытăнса тăмасть. Кусан-çŭрен кирек хăш вăрманта ĕрчетĕр тесен курăк çулса, вĕтлĕх касса, йĕкел пуçтарса, шыв-шур хĕрринче чĕр чуна хăратса апатсăр-шывсăр хăвармалла мар.

– Нумай ял çынни çывăхри пĕвепе кŭлĕре кайăк кăвакал, сăрă чарлан, тăрна е ытти шултра кайăк чĕп кăларнипе савăнма-мухтанма пултараймасть, вĕсене кŭршĕ ялта та курмасть. Ял тăрăхĕнче ĕрчеме май тăвасси пирки мĕн сĕнетĕр?

– Совет тапхăрĕнче республикăри нумай шурлăх-путлăха типĕтсе, шыв управĕсем туса, юхан шыв юпписене тŭрлетсе шыв-шур кайăкĕн пысăк пайне чĕпĕ кăлармалли вырăнсăр хăварчĕç. Управсем ăна лайăхрах ĕрчеме май туса парĕç теттĕмĕр. Шел, ĕмĕтленни тŭрре тухмарĕ. Шыв шайне хăпартсан пĕр пайĕ йăх тăсма кŭршĕ регионсене вĕçсе кайрĕ, тепри Çĕнĕ Шупашкарпа Улатăрти хура шыва тасатакан хатĕрсен таврашне, Куславккапа Пăрачкав районĕсенчи пулă ĕрчетекен хуçалăхсен пĕвисене суйласа илчĕ. Вĕсенче хунакан шывшур кайăкĕ хăйĕн тĕсĕпе самаях пуян. Сăлтавне этем тунă хатĕр-хĕтĕр çумĕнче ахаль чарлăкпа ахаль шыв чĕкеçне йăва çавăрма меллипе ăнлантаратпăр. Вĕсем çăткăна хирĕç пĕрле тăрса хŭтĕленеççĕ, çăмартапа, чĕпĕпе тăранакан кусан-çŭрене аякка хăваласа яраççĕ. Лешсем çич юта хăратнине юхан шыв, шурлăх кайăкĕсем лайăх пĕлеççĕ, хастарсен çывăхĕнче хŭтлĕх тупаççĕ, йăва çавăраççĕ. Кун пек ырлăхра вун-вун тĕрли чĕп кăларса çитĕнтерет. Эпĕ çав лаптăксенче çуллен тенĕ пекех пулатăп.

– Территорисем хăш-пĕр чĕрĕлĕх, ўсен-ларан шутне ўстерчĕç теме пулать-и?

– Çапла каласа çирĕплетместĕп, мĕншĕн тесен вĕсенче ку ыйтупа ятарласа, чылай çулхине пĕтĕмлетсе тĕпчев ирттермен: чĕр чун шутне, вăл вун-вун çулта мĕнлерех улшăннине уйăммăн тишкермен. Чăн та, юлашки çулсенче лаптăксенчи чĕрĕлĕх хисепне пайăрăн шута илме тăрăшатпăр. Вăл пире тивĕçлĕ пĕтĕмлетŭ тума кирлĕ пулĕ.

– ÇÇУСТсене хŭтĕлес тĕлĕшпе мĕнле органсемяваплă?

– Йĕпреç районĕнчи Пăкăян, Вăрнар районĕнчи Калинино, Çĕмĕрле районĕнчи Кăмаша саккаслăхĕсен ĕç-хĕлне, вĕсене браконьерсенчен хŭтĕлессине республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви тата Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби йĕркелеççĕ. Ыттине сыхлассине министерство хăйĕн çине илнĕ. Кунсăр пуçне ÇÇУСТ çинчен калакан саккунпа килĕшŭллĕн çĕр хуçисен, ăна тара илнисен, унпа усă кураканнисен хăйсен техникипе çыннисене территорие кĕртнĕ чухне сыхлав йĕркине пăхăнмалла.

– ÇÇУСТ дирекцине республикăра пурăнакансенчен мĕнле ыйтусем килеççĕ?

– Ытларах – шкулсенчен. Директорсем ачасене çŭлте-çĕрте çŭренпе, ўсен-тăранпа паллаштармашкăн территорисене кĕртме ыйтаççĕ. Вĕренекенсем вĕсенче тĕпчев ирттерме хăнăхаççĕ. Ку енĕпе Етĕрне районĕнчи Тури Ачак шкулĕн ырă тĕслĕхне палăртатăп. Унта çĕр ĕçне тăван тавралăха сиен кŭмесĕр йĕркелеме, çырма-çатра çулне пŭлессине пĕрремĕш вырăна хума вĕрентеççĕ.

– «Хыпар» редакцине Вăрнар районĕнчен çыру килчĕ. Кŭлхĕррине çŭп-çаппа вараласа сăнсăрлатни, кŭлĕ таврашне тирпейлеменни çинчен пĕлтерчĕç. Ăна хăш организацин тасаттармалла?

– Çут çанталăк тата экологи министерстви çак уйăхра Кŭлхĕррине тирпей-илем кĕртме, çыран хĕррине кŭлĕ патшалăх хŭтĕлекен территори пулнине пĕлтерекен хăма вырнаçтарма, уçăлса çŭрекенсем валли кану кĕтесĕ майлаштарма, çак ĕçе пурнăçлама предприяти суйласа илес тĕлĕшпе хаклашу йĕркеленĕ палăртнă. Çулла кŭлĕ таврашне çывăхри ялсенчен, хуласенчен пуçтарăнаççĕ. Хăшĕ-пĕри кŭлĕ хĕррине кăнăш-канăш хăварать – административлă йĕркене пăсать. Тивĕçлĕ органсем кун пеккисене кирек хăçан та явап тыттарма пултараççĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
калаçнă

Çавра сĕтел

Çĕнĕлĕх куçа уçрĕ

Çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче ЧР Наци библиотекинче «çавра сĕтел» хушшинчи калаçу иртрĕ. Унта хутшăннисем Чăваш Ен çут çанталăкĕн еткерлĕхне тишкерчĕç.

Республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви Мускавран килнĕ хаклă хăнасене, Шупашкарти ăсчахсен ушкăнне тăван тавралăха хŭтĕлессишĕн тăрăшаканнисене тĕл пултарса ырă ĕç тунине палăртас килет. Чи малтанах Иван Исаев министр çут çанталăка упрассишĕн вăй хуракансене министерство Дипломне тата Тав çырăвне парса хавхалантарчĕ.

Раççей Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн çут çанталăк еткерлĕхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен ушкăнĕн дирекцийĕн ĕçтăвкомĕн ертŭçи Владимир Зотов «Раççей регионĕсен çут çанталăк еткерлĕхĕ: тавралăх умĕнчи çивĕч ыйтусене тĕрлĕ енчен шайлаштарса татса парасси» ятпа доклад турĕ. 2010 çулхи пушара пула сăтăр кŭнĕ вăрмана тавăрас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тума, тăван тавралăха симĕслетессишĕн хунав ытларах лартма чĕнсе каларĕ.

Пĕтĕм Раççейри «Йывăçсем – çут çанталăкăн чĕрĕ палăкĕсем» программа картинчи сертификат комиссийĕн председателĕ Сергей Пальчиков «Раççейре йывăç пăхса çитĕнтересси. Çивĕч ыйтусемпе вĕсене татса парасси» ыйтăва çутатрĕ.

Коммерци организацийĕ шутланман «Сывă вăрман» çуматшлăхăн обществăпа çыхăну йĕркелекен департаменчĕн ертŭçи Михаил Еремин Пĕтĕм Раççейри «Йывăççем – çут çанталăкăн чĕрĕ палăкĕсем» программăпа паллаштарчĕ. Çĕр-шыври тата ун тулашĕнчи тĕлĕнмелле йывăççем çинчен каласа кăтартрĕ. Каласăва хутшăннисем вĕсен сăн ўкерчĕкĕсемпе хапăл тусах кăсăкланчĕç. Маншăн Дагестанри, Германири, ытти çĕр-шыври çут çанталăк объекчĕсем çĕнĕлĕх пулчĕç. Америкăра çитĕнекен секвойя çинчен Чăваш Енре пурăнакансенчен нумайăшĕ илтментĕр. Чи ватти 3,5 пин çулта. Чылайăшĕ вăтамран 60 метра яхăн, хăшĕ-пĕри 90 метр ытла çитĕнет. Аллăшĕ 105 метра кармашать. Вĕсенчен пĕрин диаметрĕ – 11,1, таврашĕ 31,3 метрпа танлашать. Çак палăксен çывăхĕнчен çулталăк тăршшĕпех çын татăлмасть. М.Еремин кун йĕркинчи темăран пăрăнса Шупашкар тинĕс хĕрринчи пĕр-пĕр хулана аса илтернине палăртрĕ.

Шкул тулашĕнчи вĕренĕвĕн «Карăш» экологи-биологи центрĕн методисчĕ Марина Нараткина çак учрежденире тĕп хулари ачасене çут çанталăка упрама вĕрентес тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕçсем çинче чарăнса тăчĕ.

Ăслăлăх сотрудникĕ Лариса Балясная хăйĕн сăмахне Шупашкарти ботаника садĕнче çитĕнтерекен йывăç-тĕме еплерех тĕпченине халалларĕ. Унта шкул ачисен вĕренĕвне те йĕркеleççĕ. Вĕсем республикăра çеç мар, çĕр-шывра ирттерекен олимпиадăсенче те малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Экологи вĕренĕвĕпе туризм пайĕн ертŭçи Максим Федоров хăйне уйăрнă вăхăта «Сăрçи» заповедник ĕç-хĕлĕпе вĕренекенсене паллаштарас ĕçе уйăрчĕ. Кунта «Усрав – тавралăха илсе çитерекен çул» тата «Усравлăх ытамĕнче» проектсене пурнăçа кĕртеççĕ. Унта заповедник пуянлăхне тĕпчеме тĕллев тытнă çамрăксене явăçтараççĕ.

«Заволжье» çут çанталăк паркĕн ертŭçинче тăрăшнă Сергей Сергеев Атăл леш енчи тавралăха хŭтĕлессипе, тĕп хулари Асамат кĕперĕн микрорайонĕнчи йывăççене уямасăр каснипе çыхăннă çивĕч ыйтусене хускатрĕ.

Етĕрне районĕнчи Пĕрçырлан шкулĕн вĕрентекенĕ Валентина Константинова ачасене тăван тавралăха юратма вĕрентессипе пухнă паха опытпа паллаштарчĕ.

■ **Тимĕр АКТАШ**

Кăларăма Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.